Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАЙ
24
ЫТЛАРИКУН
117 (4930) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Чăваш халăхĕн РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене тăратакан пирвайхи кандидатсем — халăхсен генилĕ çулпуçĕ, Ленин ĕçĕсене малала туса пыракан, социалисăм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ — И. В. СТАЛИН тата унăн чи çывăх соратникĕсем — В. М. МОЛĂТĂВ, М. И. КАЛИНИН, К. Й. ВОРОШИЛĂВ, Л. М. КАГАНОВИЧ, Н. И. ЙЕЖОВ, А. А. ЖДАНĂВ, А. А. АНДРЕЙĔВ, А. И. МИКОЙАН, В. Йа. ЧУБАРЬ йулташсем

Суйлав умĕнхи канашлусем

Суйлав кампани сарăлсах пырать. Пур çĕрте те РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратас ĕç пырать.

Предприйатисемпе совхозсенче — рабочисен, инженерла-техникла работникĕсен, служащисен пĕрлехи пухăвĕсенче, колхозсемпе ялсенче — колхозниксемпе йединоличниксен пĕрлехи пухăвĕсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратакан пирвайхи кандидат вăл — тĕнчен ултă мĕш пайĕнче Ленинпа пĕрле пролетарилĕ революци туса социалисăм çĕршывне организацилекенĕ Сталин, Сталинпа пĕрлех, суйлавçăсем Верховнăй Советсене депутата суйлама Сталинăн чи çывăх, йулташĕсене — Молăтăв, Каганович, Калинин, Ворошилăв, Йежов, Жданăв, Микойан, Чубарь, Андрейĕв йулташсен кандидатурисене тăратаççĕ.

Верховнăй Советсене депутата суйлама Сталин йулташа, партипе правительства руководителĕсене палăртнипе пĕрлех, рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ рабочи класпа хресченсем хушшинчен Совет çĕршывĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене, Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешекенсене кандидата тăратаççĕ.

Халĕ округсенче суйлав умĕнхи канашлусем пыраççĕ. Округсенчи суйлав умĕнхи канашлусене хапрăк-савăтсенчен, совхозсенчен, колхозсенчен, учрежденисенчен, шкулсенчен рабочисемпе хресченсен тата совет интеллигенцийĕн пĕрлехи пухăвĕсем, коммунисла организацисемпе профсойузсен тата ĕççынни обшчĕствисем хăйсен представителĕсене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата кама тăратасси çинчен татăклăн калаçса татăлма йараççĕ.

Шупашкар суйлав округĕнче виçĕмкун пулса иртнĕ суйлав умĕнхи канашлу РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкарти предприйатисенчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служащисен пĕрлехи пухăвĕсем, çавăн пекех тата Шупашкар, Ишлей, Тутаркас районĕсенчи колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕсем, коммунисла организацисем, профсойузсем, ĕççынни обшчĕствисем тăратнă Сталин йулташ кандидатурине, Сталин йулташпа пĕрле унăн чи çывăх йулташĕсене — партипе правительства руководителĕсен кандидатурисене питĕ пысăк хаваслăхпа йышăнчĕ. Канашлу Шупашкар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата тăратма Калинкина йулташ кандидатурине йышăнна. Калинкина йулташ кунçулĕнче епĕр Совет çĕршывĕнче, социалисăм çĕнтернĕ çĕршывра кăна хĕрарăм та арçынпа пĕртан правалă пулнине тата тепĕр хут куратпăр. Унтан та ытларах — пĕр, пирĕн çĕршывра кăна хĕрарăм капиталисăм пĕркин чуралăх сăнчăр майкăчĕнчен хăтăлса чăн-чăн ирĕклĕ гражданин пулма пултарать.

Кам пулнă-ха вăл Калинкина ĕлĕк? Ĕлĕк вăл кухаркă, халĕ — Шупашкар хула совет председателĕ. Мĕн пек пысăк утăм! Коммунистсен партийĕ, Ленин — Сталин партийĕ анчах çынсене çакăн пек ӳстерме пултарать.

— Профессăрсен, доцентсен, преподавателĕсен, студентсен час-часах хула советне тĕрлĕрен ыйтусемпе пыма тивет. Хула совет председателĕ Калинкина йул. пур чухне те ĕçе пĕлсе, тĕплĕн татса парать. Çавăнпа та институт работникĕсен коллективĕ ăна РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнипе йышăнать, — тет Берзин профессăр. Çакăн пек хак пани вăл тĕрĕс.

Округсенче тата районсенче кандидатсем палăртма пухăнакан суйлав умĕнхи канашлусенче, çавăн пекех тата суйлав участокĕсенче ĕçлеме довереннăйсем уйăраççĕ. Уйрăмах пысăк задачăсем тăраç çĕ довереннăйсем умĕнче. Вĕсен ĕçĕнчен çитес суйлавра коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтересси чылай килет. Довереннăйсен, суйлавçăсен ирĕкĕне килĕшӳллĕ пулса, агитацилĕ ĕçе пысăк пахалăхĕшĕн кĕрешмеле, тăшмансен хирĕçĕвне хайаррăн отпор памала. Çак ĕçре пĕсене парти организацисен куллен-кун пулăшса пымала. Чăн малтан, халех парторганизацисен довереннăйсене агитаци ĕçĕнче пулăшма актив уйăрса памала. Çак актив çине тайăнса довереннăйсен суйлав участокĕсенче округ тăрăх тăратнă кандидатсемшĕн большевикла вирлĕ агитаци тумала. Парти организацийĕсен довереннăйсене активпа пĕрле пухса канашлусем туса ирттермеле, вĕсене унта тĕплĕ инструктаж памала.

ССРС Верховнăй Совечĕ суйлавĕ вăхăтĕнче хăшпĕр районсенче довереннăйсем ĕçе питĕ кайа йулса тытăннă. Депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн суйлав кунĕ çитсе тăнă тĕле тин агитаци тума тытăнни те пулнă. Çавăн пирки те хăшпĕр суйлавçăсем хушшинче кандидат çинчен тĕплĕн пĕлменнисем пулнă. Çак йăнăша пирĕн хисепе илес пулать, ăна тепĕр хут тумала мар. Иртнĕ суйлавра тепĕр йенчен тата, агитаци литературине вăхăтра кăларса ĕлкĕрейменнипе те довереннăйсемпе актив агитаци ĕçĕнче чăрмав турĕ. Парти Обкомĕн пичет пайĕпе пропагандă пайĕн çакна хисепе илсе, агитаци, литературине суйлав участокĕсене вăхăтра çитерме кирлĕ ĕçсене халех тăвас пулать.

Тепĕр икĕ кунтан округсенчи суйлав комиссийĕсем суйлав умĕнхи канашлусенче депутата тăратнă кандидатсене регистрацилеме тытăнаççĕ. Çав вăхăт тĕлнех пур суйлав участокĕсенче те суйлавçăсен спискисене пурне те пĕлтерме кăларса çакмала. Спискăсене тата тепĕр хут тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала. Вĕсенче сахалтан та иртнĕ кампанире пулнă çитменлĕхсем пулмала мар (суйлавçăсен йачĕсене тĕрĕс мар кăтартни, спиксерсе хăварни, икшер хут çырни т. ыт. те).

Суйлав кампанин ответлă тапхăрне кĕтĕмĕр. Парти организацийĕсен суйлава ăнăçлăн ирттерме кирлисене пурне те кĕске вăхăтра туса çитермеле.

И. В. СТАЛИН, В. М. МОЛĂТĂВ йултащсем Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă

БАКУ, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Баку хулинчи 56-мĕш номĕрлĕ Ленински суйлав округĕнчи обшчĕствăлла организацисен тата ĕççынни обшчĕствисен представителĕсен майăн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ округри суйлав умĕнхи канашлăвĕ, унта 1.100 çын пулнă, „Ленинефть“ трестăн предприйатисенчи рабочисен инженерла-техникла работниксен тата служащисен суйлав умĕнхи пухăвĕсен решенисемпе килĕшсе, пĕр кăмăллă пулса Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа палăртнă. Округри суйлав умĕнхи пуху И. В. Сталинран Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма çав округ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтнă.

Майăн 21-мĕшĕнче суйлавçăсем И. В. Сталин йулташ Ленински суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлтернине илнĕ. Çав вăхăтрах Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ — В. М. Молăтăв йулташран Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма Сталински суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлтернине илнĕ.

Ку пĕлтерӳве илсен Ленински суйлав округĕнчи суйлав комиссийĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта И. В. Сталин кандидатурине регистрациленĕ.

Баку хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ Сталински суйлав округĕнчи суйлав комиссийĕ В. М. Молăтăв кандидатурине регистрациленĕ.

* * *

Вăрнар суйлав округĕ

Колцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов

йулташсен кандидатурине тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Николай Павлăвич Павлăв

йулташ кандидатурине палăртнă

ВĂРНАР. Сталин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Пухура чи малтан 56 çулхи колхозник-стахановец Йефим Васильевич Йерошин йулташ сăмах тухса каларĕ.

Йерошин йулташ сăмахĕ

Епĕр революциччен Колцовка йаленче чухăнлăх, выçлăх пусмăртуснисĕр пуçне, урăх нимĕн те курман. Халĕхи вăхăтра пирĕн колхозăн пысăк тăилемлĕ клуб, 10 çул вĕренмелли шкул, больница, кăларакан кино, радио, електростанци т. ыт. те пур. Епĕр халĕ ĕлĕкхи пек çиме çăкăр çитменнипе аптăрамастпăр. Халăхсен çулпуçĕ асла Сталин тата коммунистсен партийĕпе совет правительстви тĕрĕс йĕркесе пынипе, епĕр пуйан та культурлă пуранакан пултăмăр. Пайан епĕр çак пухăва РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата кама суйламалли çинчен сӳтсе йавма пухăнтăмăр. Верховнăй Советсене ĕç халăхĕсемшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен, партире тăракан тата партире мар большевиксем кăна суйланмалла. РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама малтанхи кандидата епĕ Сталин йулташпа унăн соратникĕсене В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йулташсене тăрататăп. Чăваш АССР Верховнăй Советне Вăрнар суйлав округĕнчен депутата суйлама ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн çекретарне Николай Павлăвич Павлăв йулташа кандидата тăратма сĕнетĕп.

Пухури пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене епĕ тăратнă кандидатсене хута кĕме ыйтатăп.

Вăрнар районĕнчи Колцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 326 çын пулнă

1. Вăрнар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕн Политбюро членĕсене И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йулташсене кандидата тăратас.

2. Вăрнар суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б) Парти Чăваш Обком çекретарне, — 1905 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Шупашкарта пурăнать, — Николай Павлăвич Павлăв йулташа кандидата тăратас.

3. И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йулташсенчен Вăрнар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйсен килĕшӳне пама ыйтас.

Пуху Н. П. Павлăв йулташран Вăрнар суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтать.

Наратчаки суйлав округĕ

Çĕнтĕрвăрри районĕнчи Вăрманкассинчи „Культура“ колхозри колхозниксем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Йевгени Иванăвич Одинцов

йулташ кандидатурине палăртнă

Çĕнтĕрвăрри районĕнчи „Культура“ колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 93 çын пулнă

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн советпа суту-илӳ пайĕн инструкторне — 1901 çулта çуралнă, 1925 çултанпа ПСК(б) Парти членĕ, Шупашкарта пурăнать, — Йевгени Иванăвич Одинцов йулташа кандидата тăратас.

2. Колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ Й. И. Одинцов йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Наратчаки суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

● ◆ ●

Ăмăртакан колхозсемпе районсен пĕрлешӳллĕ канашлăвĕсене пухасси çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1938 çулхи майăн 21-мĕшĕнче йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

1. 1938 çулхи майăн 25-мĕшĕнчен тытăнса ийунĕн 1-мĕшне çитиччен ăмăртса ĕçлекен колхозсемпе районсен колхоз председателĕсен, МТС директăрĕсен, агрономсемпе зоотехниксен пĕрлешӳллĕ канашлăвĕсене ирттерес. Çав канашлусенче çуракки ĕçĕсен итогĕсене тата калчасене пахса ӳстерес ĕçпе тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленессине организацилесси çинчен сӳтсе-йавмала тăвас.

2. Уйрăм районсем тăрăх çав канашлусене ирттермелли плана йышăнас (хушса çырни çине пăхăр*).

3. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, ПСК(б)П Обкомĕн Йалхуçалăх пайне тата ПСК(б)П райкомĕсене канашлусем умĕн пĕр-пĕрине ăмăртакан колхозсен тата районсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухассине организацилесе канашлусене „тĕплĕн хатĕрленсе“ ирттерме хушас.

ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕ Г. Иванов.

---

*) Канашлусем ирттермелли плана çитес номĕрте пичетлетпĕр.

● ○ ●

Лигă наци Совечĕн 101-мĕш çессийĕн итогĕсем тĕлне

Çак кунсенче Лигă наци Совечĕн çессийĕ пулса иртнĕ. Лигă наци Совечĕн çессийĕ пысăк ыйтусем тăрăх йышăнса тăракан чылай ыйтусене сӳтсе йавнă: Абиссинипе Испани ыйтăвĕсем, Китай правительстви чĕнсе калани тата Швейцари нейтралитечĕ пирки тăнă ыйту.

Фашисла агрессăрсене витсе тăракансем, коллективлă хăрушсăрлăха хирĕç тăракан государствăсем — çессинче хăйсен ĕçĕсене татăшсăн пысăк активлăхпа тăрăшнă. Анчах, çав çĕршывсен представителĕсене (чи малтанах Англине), хăйсен агрессăрпа килĕшӳ тумалли политикине пĕтĕмпех ырлĕç тесе шанă ăскерсене, хирĕç чылай государствăсем тăнă.

Самахран, Англи правительстви Лигă нацинче Итали умĕнче Итали Абиссинине тытса илнине йышăнтарасшăн пулнă. Анчах, Лигă Совечĕ, ытти государствăсен шухăшĕсем çинче чăрăнса тăрса, çав ыйтăва хăйне мĕнле килĕшнĕ, çавăн пек татса пама кашни государствăна права пама хăварнă.

Кун йĕркинчи тепĕр ыйту вăл — Испани ыйтăвĕ пулнă. Испанин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Альварес дел Вайо тӳрех çапла каланă: Испанири вăрçа вăрама тăсални тата палхавçăсемпе интервентсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Испани халăхĕ тунă нумай çухатусем, тепрен илсен, Англипе Франци правительствисем йĕркесе пыракан „хутшăнмала мар“ текен политикăна пула пулса пырать. Çак политикă чаннипе илсен Италипе Германи агрессăрĕсене пулăшни пулса тăрать, — тенĕ. Альварес дел Вайо çав преступленилле политикăна пăрахăçа кăларма ыйтнă. Испани требованийĕсем майлă ССР Союзĕн представителĕ Литвинав йулташ тăтăкланах тăнă.

Испани республикĕн çаккунлă требованийĕсене хирĕç Англи представителĕ лорд Галифакс хыттăн тухса каланă. Галифакс майлă Франци представителĕ Бонне пулнă. Францисем пуçне Галифакс майлă тепĕр фашисла икĕ правительствă кăна — Польшăпа Румыни кăна пулнă. Тăхăр государствă, Англине хирĕç уççăнах сасăласшăнсăр тытăнса тăрса, вĕсем нимăм майлă та сасăламан, çапла тунипе вĕсем агрессăрпа калаçăвне килĕшменни çинчен кăтартса панă. Сасăлани çак итогĕ, паллах, Англи правительствин политикине çапни пулса тăнă.

Совет Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Китайа пулăшас пирки Китай правительстви ыйтнине сӳтсе-йавнă. Лигă Совечĕ Йапони агрессине сивлекен решени тата Лигă нацин пур членĕсене те Китайа пулăшма чĕнекен решени йышăннă. Çак ыйту тĕлĕшпе йышăннă решенине пурте пĕр шухăшлăн пулнипе йышăннă. Польша кăна сасăламан. Çапла тунипе вăл фашисла государствăсен агĕнчĕн ролне вăйлăн туса пыраканни пулса тăнине тепĕр хут кăтартса панă.

Лигă наци Совечĕ Швейцари правительствин Швейцарине, вăл нейтральнăй государствă пулса тăрать тесе шутласа, агрессăра хирĕç укçа-тенкĕ тата економикăлă санкцисене туса пырасси çинчен хăтарма ыйтнине сӳтсе йавнă.

Çак ыйту тĕлĕшпе каланă хăйĕн чаплă сăмахĕнче Литвинав йулташ çапла кăтартса панă: „Швейцари сĕнĕвĕ Лигă наци уставне пăсни патне тата ăна пачах пĕтерсе хурасси патне илсе пырать. Швейцари примерĕ çак тĕлешрен хăрушă пулса тăрать: Лигă нацине кĕрекен кирек хăш государствă та, пĕр лайăх кун вăл хăйне Лигă уставĕ ун çине хуракан обйазательствăсенчен ирĕкле, — тесе шутлама пултарать. „Швейцари ыйтăвĕ, — тесе каланă Литвинав йулташ, — сасăлăн çивĕчлĕхĕ пулса тăрать, çав сасăлăн çивĕчлĕхĕпе çавăн пек требованисене ытти государствăсем йенчен те туртса кăларма уçă вырăн тумала“. Литвинав йулташ çапла паллă туна: Швейцари Лигă членĕсене агрессăртан хӳтĕлес обйазательствăсенчен хăтăлать пулсан, вара вăл Лигăн ытти членĕсем ăна хӳтĕлеччĕр тесен, вăл вĕсенчен пулăшу ыйтма пултараймасть.

Совет пĕр пĕчĕк государствăн — Чили государствин вăл Лигă нацинчен тухни çинчен панă зайавленине итленĕ. Чили Лигă нацинчен тухнин сăлтавĕ — вăл Лигă Совечĕ Чили правительствин сĕнĕвĕнчен пăранни пулнă. Чили правительстви, агрессăрсен агĕнчĕ пулса тăраканскер, Лигă наци уставне Лигă членĕнче мар государствăсен-агрессăрсен интересĕсемпе килĕшӳллĕн улăштарма сĕнӳ панă. Чили Лигă нацинчен тухни çинчен пĕлтерни никама та тĕлĕнтермен. Лигă наци членĕнчен пĕр государствă, агрессăрсен агĕнчĕ пулса тăракан государствă, тухнăшăн, Лигă наци начарланать кăна мар, йăлтах урăхла, вăл Лигăна çирĕплетĕ.

Лигă наци Совечĕн пулса иртнĕ çессийĕ агрессăрсен политикине уçăмланах майлă пулса тăракансем çав тери сахаллине тата тепĕр хут кăтартса панă.

Совет правительствин позиции ССР Союзĕн Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Литвинав йулташ сăмахĕсем, унăн сăмахĕсем майлă Испанипе Китайри паттăр халăхсем тăнă, тата Лигă нацине шалтан çĕмĕрме хăтланнă агрессăрсен представителĕсене хирĕç татăклăн вăл тухса каланă сăмахсем пĕтĕм тĕнчене хăйсем çине çаврăнса пăхтарнă, вĕсене пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем çав тери аша кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

РСФСР Верховнăй Советне суйламали Шупашкар суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

Шупашкар, Тутаркас тата Ишлей районĕсенчи рабочисен, интеллигенцин, колхозниксен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пит пысăк хаваслăхпа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, М. И. Калинин, К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов, А. А. Жданăв, А. И. Микойан, В. Й. Чубарь, А. А. Андрейĕв тата П. И. Калинкина

йулташсене палăртрĕ

Майăн 22-мĕшĕнче, Шупашкар хулинчи кино-театр залĕнче, хулари рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служащчисен, Шупашкар, Тутаркас тата Ишлей районĕсенчи колхозсен пĕрлешӳлĕ пухăвĕсем суйласа йанă представителсен, коммунисла организацисен тата профсоюз организацисен, ĕççынни общĕствисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу трибуни çинче ремонтнай-механически савăтри рабочи стахановĕç И. Ф. Йерошкин йулташ.

— Мана есĕр,—тет вăл,—хамăр савăтри рабочисен йачĕпе чăваш халăхĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйламали пĕррemĕш кандидата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемшĕн хаклă çынна, пире телейлĕ пурнăç туса панă çынна, ана Йевропăри тата Америкăри пĕтĕм пролетариат хăйне капиталиссен пусмăрĕнчен çăлакан тесе шутласа тăракан çынна, хамăрăн çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталина палăртма ирĕк парăр.

Залăри пĕтĕм халăх тăвăллăн алă çупать. Канашлăва пуçтарăннисем пурте ура çине тăрса Сталин йулташа хаваслăн саламлаççĕ.

— Малалла,—тет И. Ф. Йерошкин йулташ,—пирĕн савăт коллективĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Прасковйа Иванăвна Калинкина йулташа палăртать. Вăл Ленин—Сталин ĕçне пĕтĕм чĕререн паранна боԓшевик. П. И. Калинкина йулташ иртнĕ вăхăтра кухарка пулнă, хаԓхи вăхăтра государствăн ответлă ĕçĕнче—Шупашкар хулин совечĕн председателе пулса ĕçлет.

Ӳнтан Деткомиççи хапрăкĕнчи рабочи-стахановĕç Спирин йулташ тухса калать. Вăл хăйсен хапрăкĕнчи рабочисен тата служащчисен йачĕпе И. В. Сталин тата П. И. Калинкина йулташсене РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнин хутне кĕрсе калать.

Йалхуçалăх институчĕн профессăрĕ И. А. Берзиӊ йулташ уçăмлă та хĕрӳлĕ сăмах тухса каласа, П. И. Калинкина йулташ кандидатурине хӳтлет.

Малалла Шупашкар районĕнчи „Красный флот“ колхоз представителĕ И. А. Ґаврилăв йулташ, „Х лет Октября“ колхозри колхозниксен йачĕпе Ануфрий Морозăв йулташ тухса сăмах каларĕç. Анисимăв йулташ çыхăну ĕçĕнчи работниксен йачĕпе çыхăну ĕçĕнчи тата радиоузелти работникĕсен пухăвĕ йышăннă постановленийе вуласа парать, вăл пухура пурте пĕр сасăпа Шупашкар суйлав округĕнчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, М. И. Калинин, К. Й. Ворошилăв, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, А. А. Жданăв, В. Й. Чубарь, А. А. Андрейĕв йулташсене палăртнă.

Кун хыççăн Чăваш педагогика институтĕнчи студентсемпе профессăрсен тата преподавателĕсен йачĕпе Васийĕв йулташ, Шупашкар хули совечĕн председателĕ П. И. Калинкина йулташ сăмах тухса каларĕç.

Суйлав умĕнхи канашлу ĕçлесе пĕтерес умĕн Чăваш педагогика институчĕн представителĕ Шелигăв йулташ сăмах илсе, канашлу постановленийĕн текстне вуласа парать, постановленине пурте пĕр сасăпа йышăнаççĕ.

Çак канашлура Шупашкар хулинчи тата Тутаркас, Ишлей, Шупашкар районĕсенчи суйлав участкисенче ĕçлеме доверенăйсене уйăрса çирĕплетрĕç.

И. Ф. Йерошкин йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Епĕр кунта пухăнса тĕнчери чи демократилĕ Конституци тăрăх, РСФСР халăх парламентне ирĕклĕн кандидатсем палăртса тата вĕсем çинчен сӳтсе-йавнишĕн пĕр вĕçĕмсĕр хаваслă.

Историлĕ кунта—ийунĕн 26-мĕшĕнче аслă вырăс халăхĕ, РСФСР-че пурăнакан халăхсемпе пĕрле, хăйĕн влаçĕн аслă органне суйлать, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ—пур нацисен идейлă-политикăлла пĕрлĕх блокĕ никам çĕмĕреймми пулса тăнине демонстрацилет.

Епĕ, ремонтнай-механически савăтри рабочисен йачĕпе, чăваш халăхĕнчен РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйлама тĕнчери пĕтĕм ĕççыннисемшĕн хаклă çынна, пире телейлĕ пурнăç туса паракана, хамăрăн çулпуçа Иосиф Виссарионăвич Сталина тăрататăп.

Сталин йулташ пире куԓтурлă та телейлĕ пурнăç туса пачĕ. Ĕлĕк хĕсĕк пурнăçпа пурăннă чăваш халăхĕ, хутпĕлменскер, выçăскер, чухăнскер,—Ленин—Сталин партийĕ пулăшнипе тата сталинла Конституци тăрăх пуйан промышленнăçлă тата йалхуçалăхлă малта пыракан ордĕнлă республикă хуçи пулса тăчĕ.

Тата епĕр РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Прасковйа Иванăвна Калинкина йулташа тăрататпăр. Вăл ĕлĕк кухарка пулнăскер, хаԓ государствăн ответлă ĕçĕнче—Шупашкар хула совечĕн председателĕ пулса, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн паранса ĕçлет.

Ремонтнай-механически савăтри рабочисен, инженерла-техникла работниксен, тата служащчисен коллективĕ Шупашкар суйлав округĕнчи суйлавçăсене пурне те РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйлама тăратнă кандидатурăсемшĕн тăма чĕнет. (Ал çупаççĕ).

И. А. Берзиӊ профессăр сăмахĕ

Наукă работникĕсенчен, Чăваш йалхуçалăх институтĕнчи коллективран—чи ирĕклĕ тата телейлĕ суйлавçăсене хĕрӳлĕ салам!

Йулташсем! Епĕр кунта РСФСР Верховнăй Совет депутачĕсен кандидатурисем çинчен сӳтсе-йавма пухăннă. Иртнĕ суйлавра, ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чух, коммуниссемпе партире тăманнисен çирĕп блокĕ тавра пĕрлешсе, совет халăхĕ хăйĕн пĕрлĕхне, Ленинпа Сталин партине тата совет правителствине чĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕ. Совет халăхĕн пĕрлĕхĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕнче татах тепĕр хут уççăн курăнĕ.

ССРС Верховнăй Советне хамăр çĕршывăн чи аван ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйласа, Чăваш йалхуçалăх институчĕн коллективĕ пĕр шухăшлă пулса коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕшĕн сасăларĕ. Верховнăй Совет суйлавĕ пирĕн вĕренӳ ĕçне, аслăлăхпа общĕствăлă ĕçе татах лайăхлатса пыма май пачĕ.

Çак иртнĕ кунсенче аслă шкулсенчи работниксен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Сталин тата Молăтăв йулташсем çав канашлура тухса каласа, аслă шкулсенче ĕçлекенсен малашнехи задачăсене кăтартса пачĕç. Сталин йулташ çав задачăсем пирĕн çĕршывра, чи демократилĕ çĕршывра çеç пулма пултаракан малта пыракан аслăлăхăн задачисем пулса тăнине кăтартса пачĕ.

Аслă шкулсенчи работниксемпе студентсем чĕнсе каланинче çапла калана:

„Çуркуннехи екзаменсене тата государствă екзаменĕсене лайăх туса иртересси, аслă шкулсене вĕренме илес плана пурнăçа кĕртесси тата çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси—пирĕн ĕçĕн çывăх вăхăтра тумалли задачăсем пулса тăраççĕ. Хамăрăн мĕн пур ĕçе пирĕн сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленсе иртерессинче активлăн хутшăнса ĕçлессипе çыхăнтарса тумала“.

Çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас майпа пирĕн аслăлăх работникĕсем, вĕренме çĕнĕрен студентсем илес май, институтăн аслăлăх ĕçĕсем çинчен докладсем тума кайнипе пĕрлех, суйлав участкисенче пысăк та ответлă ĕçсем туса иртереççĕ.

Ытти тĕрлĕрен задачăсене татса парас çĕрте, сăмахран, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси, кунта вара пирĕн вырăнти учрежденисем тата вĕсен руководителĕсем пулăшса пырасси пĕчĕкех мар вырăн йышăнса тăрать.

Ку тĕлĕшпе епĕ Шупашкар хула советне илсе калатăп, унăн председателĕ пулса Прасковйа Иванăвна Калинкăна ĕçлет.

Профессăрсене, доцентсене, преподавателсене тата студентсене тĕрлĕрен ыйтусемпе хула совечĕн ыйтма тӳр килнĕ. Хула совечĕн председателĕ П. И. Калинкина йулташ пирĕн çине йаланах сисĕмлĕн, кăмăллăн пăхнине епĕр курнă. Калинкина йулташа çĕнĕрен пысăк ĕçе лартнăскер. Çавăнпа ĕнтĕ институтри работниксен коллективĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă, унăн кандидатуришĕн тăрать тата вăл ĕçре халăх шаннине пурнăçлассa шанса тăрать. (Алă çупаççĕ.)

Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

МĂН-СЕНТĔР. (Хамăр корр.). Майăн 21-мĕшĕнче Тутаркас районĕнчи Мăн-Сĕнтĕрти суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу пулса иртрĕ. Канашлăва 6 пин те 800 ĕççынни суйласа йанă представителсем 147 çын пухăнчĕç.

Канашлура „Мартăн 8-мĕшĕ“ колхозри колхозник Толстов йулташ тухса каласа, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Прасковйа Иванăвна Калинкина тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Зойă Ананйĕвă Андрейĕвă йулташсен кандидатурисене сĕнчĕ. Кун хыççăн, çак сĕнӳпе килĕшсе Йефремăв (кĕçĕн тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсойузĕнчен) Пузырйов („Канаш“ колхоз колхозникĕсенчен), Калинин (районри коммунисла организацинчен), Квасковă (Калайкассинчи „Агроном“ колхозран, учителница), Пегасăв („Çейалка“ колхоз) тата ытти йулташсем те тухса каларĕç.

Канашлура 45 доверенăй суйларĕç, вĕсене округри суйлав комиççисенчи суйлавçăсем хушшинче агитацилĕ ĕçе туса пыма хушрĕç. Кун хыççăн канашлу РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округĕ тăрăх Прасковйа Иванăвна Калинкина тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Зойă Ананйĕвна Андрейăва йулташсен кандидатурисемшĕн тăма резоԓуци йышăнчĕ.

Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу йышăннă резоԓуци

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутатсем суйлама кандидатсем тăратас ыйтăва сӳтсе-йавнă хыççăн, пĕтĕм совет халăхĕн пĕррemĕш кандидачĕн тĕнчери чи демократилĕ Конституцине тăвакан Иосиф Виссарионăвич Сталинăн, унăн çывăх соратникĕсен В. М. Молатăв, К. Й. Ворошилăв, Л. М. Каганович, М. И. Калинин, Н. И. Йежов, А. А. Жданăв йулташсен кандидатурисемшĕн хĕрӳлĕн тăрать.

Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шомикри „Колос“ колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ тăратнă ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕн, çирĕп боԓшевика Зойă Ананйĕвна Андрейăва йулташăн кандидатуришĕн тăрататпăр.

Çавăн пекех округри суйлав умĕнхи канашлу Шупашкар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне Суйлама Шупашкарти „Авторемонт“ савăтĕнчи, типографинчи рабочисен, служащчисен тата инженерла-техникла работниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă, Шупашкар хула совет председателĕ Прасковйа Иванăвна Калинкина кандидатуришĕн тăрать.

Сывă пулччăр РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсем!

Сывă пултăр Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боԓшевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр социалисăм çĕнтерĕвĕн организаторĕ пирĕн çулпуç Сталин йулташ!

◆

Округсенчи суйлав умĕнхи канашлусен хроники

Канаш

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Канаш суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин, Л. М. Каганович, Н. И. Йежов йулташсен кандидатурине, çавăн пекех тата Канашри вакунсем йусакан савăтран станочница-стахановкăна — Йе. А. Антонăвă кандидатурине тăратнă.

Вăрмар

Вăрмар суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама П. Йа. Самарин йулташ кандидатурине тăратнă.

Чупай суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Марийă Феодăрăвна Феодăрăвă йулташ кандидатурине тăратнă.

Йенкасси суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу орденоносĕç Иван Александрăвич Александрăв йулташ кандидатурине тăратнă.

Куславкка

Карач суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама К. Д. Медйанин йулташ кандидатурине тăратнă.

Тĕрлемес суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин, К. Й. Ворошилăв, Л. М. Каганович йулташсен кандидатурине, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама А. И. Пожеданăв йулташ кандидатурине тăратнă.

◆

Тĕмĕр суйлав округĕ

Йелчĕк районĕнчи „Новая волна“ колхоз членĕсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иван Никифăрăвич Никифăрăв

йулташ кандидатурине тăратнă

Йелчĕк районĕнчи Хăвăл Çырмари „Новая волна“ колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

1. Епĕр, Хăвăл Çырма йалĕнчи „Новая волна“ колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама çамрăксен ăрăвне социалисăм строителстине активлăн хутшăнтарас ĕçре тăрăшса ĕçлекене, ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн çекретарне,—1908 çулта çуралнă, парти членĕ, Шупашкарта пурăнать,—Иван Никифăрăвич Никифăрăв йулташа кандидата тăрататпăр.

2 Иван Никифăрăвич Никифăрăв йулташран Тĕмĕр суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтатпăр.

◆

Йелчĕк суйлав округĕ

Йелчĕк районĕнчи „Смычка“ колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Михаил Иванăвич Калинин

кандидатурине тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Владимир Михайлăвич Немцĕв

кандидатурине тăратнă

ЙЕЛЧĔК. Майăн 21-мĕшĕнче Тайапа Ентринчи „Смычка“ колхоз членĕсен пухăвĕ пулчĕ. Пухура партире тăман колхозник Йакăв Морозăв йулташ сăмах тухса каласа сĕнӳ пачĕ. Унăн сĕнӳне колхозниксем хапăл туса йышăнчĕç.

Морозăв йулташ сăмахĕ

1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен аслă праçникĕ пулчĕ. Вăл кун епĕр хамăр сасăсене пирĕн пурнăçа лайăхлатассишĕн тăрăшакан çынсемшĕн патăмăр. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне çĕршывăн чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйларăмăр. Пирĕншĕн пайан та савăнăçлă кун. Епĕ, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин йулташăн çывăх соратникне Михаил Иванăвич Калинин йулташа кандидата тăрататăп. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Аслă Тайапари туллимар вăтам шкул директăрне Владимир Михайлăвич Немцĕв йулташа кандидата тăратма сĕнетĕп.

Йелчĕк районĕнчи Тайапа Ентринчи „Смычка“ колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

1. Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташăн çывăх соратникне Михаил Иванăвич Калинин йулташа кандидата тăратас. Йелчĕк суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Аслă Тайапа йалĕнчи туллимар вăтам шкул директăрне,—1912 çулта çуралнă, парти членĕ, Аслă Тайапа йалĕнче пурăнать,—Владимир Михайлăвич Немцĕв йулташа кандитата тăратас.

2. Пуху Михаил Иванăвич Калинин йулташран Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтать.

Владимир Михайлăвич Немцĕв йулташран Йелчĕк суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтас.

Суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ йышăннă постановлени

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар суйлав округне кĕрекен предприйатисенчи рабочисен, работницăсен, инженерсемпе техниксен, служащчисен, Ишлей, Шупашкар, Тутаркас районĕсенчи колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕсен представителĕсен, коммунисла организацисемпе профессилĕ сойузсен тата ĕççынни общĕстви представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйтăва сӳтсе-йавнă хыççăн, Шупашкарти типографинчи, Деткомиççи хапрăкĕнчи, реммехсавăтри рабочисем, инженерла-техникла работниксем, сужăшчисем Шупашкар р-чи „Осоавиахим“ колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама халăхсен çулпуçне, учителе, хамăрăн аслă туса Сталин йулташа, унăн çывăх соратникĕсене Молăтăв, Каганович, Калинин, Ворошилăв, Йежов, Жданăв йулташсене кандидата тăратасси çинчен пĕр шухăшлă пулса йышăннă решенийе питĕ пысăк савăнăçпа, хаваслăхпа хапăл туса йышăнать.

РСФСР Верховнăй Советне суйламали Шупашкар суйлав округĕнчи суйав умĕнхи канашлу çӳлте асăннă предприйатисенчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем, колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Прасковйа Иванăвна Калинкина йулташ кандидатури хутне кĕрет.

Канашлу çак канашлура пулнисене пурне те тата уйăрнă доверенăйсене Калинкина йулташ кандидатуришĕн агитацилеме хушса хăварать, округри суйлавçăсене пурне те хăйсен сассине Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен, пĕчĕк ĕçрен ответлă ĕçе—Шупашкар хули совет председателне лартнă Калинкина йулташ кандидатуришĕн пама чĕнет.

Йулташ рабочисем, работницăсем, инженерла-техникла работниксем, ĕç интеллигенчĕсем, колхозниксем!

Совет халăхĕ хăйĕн организацилĕхне, хăйĕн никам та çĕнтерейми вăйне, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн тăнине тата тепĕр хут кăтартакан кун,—сойузлă тата автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ çывхарса çитет. Пирĕн Совет çĕршывĕ çак суйлавсене промышленнăçра, йалхуçалăхĕнче, куԓтурă строителствинче тата пысăк çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илет. Пирĕн çĕршывра колхозниксем Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илмелле, тесе панă лозунга ăнăçлă пурнăçа кĕртеççĕ. Пирĕн совет правителстви мирлĕ политикăна çирĕп тытса пырать, вăрçă вутне чĕртекен фашиссен йунлă ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ, малашне те вĕсен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса пырать. Çак никĕс çинче ĕççынни массисен авангарчĕ пулса тăракан коммунисла партипе совет правителствине хамăр çĕршыври ĕççынни массисемпе Совет Сойузĕн капиталисăмла çĕршывсенчи тусĕсем йенчен йуратасси тата ытларах ӳсрĕ.

Пирĕн Совет çĕршывĕ политикăпа, техникăпа економикă тата çар тĕлĕшĕнчен нихăçанхинчен хăватлă пулса тăчĕ. Çавăнпа та хамăр çĕршывра пытанса йулнă капиталисăмлă елементсен йулашки хӳрисем троцкиссем, бухаринцăсем, буржуала-националиссем, фашисăмăн ытти агенчĕсем совет влаçне хирĕç чи усал майсемпе кĕрешес çул çине тăраççĕ, диверçи, шпионаж тăваççĕ, çын вĕлереççĕ. Çапла туса халăхăн ирсĕр тăшманĕсем ССР Сойузĕн оборонă тĕрекне, совет халăхĕн мораԓлĕ-политикăлă пĕрлĕхне хавшатма, фашисла çĕршывсене ваԓԓи совет çĕршывĕ çине вăрçăпа тапăнма çул уçма хăтланаççĕ.

Анчах та халăхăн ирсĕр тăшманĕсем йăнăшрĕç. Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕ, совет халăхĕ чĕререн йуратакан Йежов йулташ йертсе пыракан совет разведки фашисăмăн урса кайнă йыттисене вăхăтра пĕтерчĕ, вĕсене нимĕн йулмиччен пĕтерет.

Епĕр хамăрăн тăван çĕршыва—социалисăм çĕршывне йуратпăр. Хамăр çĕршыв çине, унта ĕçлекен работниксем çине тапăнма шутлакан тăшмана вăл ăçтан килнĕ çавăнта пĕтерме хатĕр тăратпăр.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен çитес суйлавĕнче пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ, çав шутрах Шупашкар суйлав округĕнчи суйлавçăсем хамăрăн организацилĕхе, боԓшевикла парти тавра, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра пĕтĕçсе тăнине тата тепĕр хут кăтартать.

Сывă пултăр Пĕтĕм Сойузри Коммунисла (боԓшевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç тата учител Сталин!

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блок çĕнтерĕвĕшĕн!

◆

Йĕпреç суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

Йĕпреç суйлав округĕнчи общĕствăлă организацисен, колхозсен, предприйатисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕнче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин тата Николай Çеменăвич Бодров

йулташсен кандидатурине палăртнă

ЙĔПРЕÇ. Майăн 22-мĕшĕнче Йĕпреç поçолкинче Йĕпреç суйлав округĕнчи общĕствăлă организацисен, колхозсен, предприйатисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура Буинскăри хăма çуракан савăтри рабочи-стахановĕç Зубов йулташ хăйсен савăтĕнчи рабочисемпе служăщчисем, инженерла-техникла работниксем тата „11-лет Чувашия“ колхоз колхозникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Иосиф Виссарионăвич Сталин, Николай Çеменăвич Бодров йулташсене кандидата тăратнине хута кĕме чĕнсе сăмах тухса каларĕ.

Йĕпреç суйлав округĕнчи общĕствăлă организацисемпе колхозсен, предприйатисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Канашлура 83 çын пулнă

1. Епĕр, Йĕпреç суйлав округĕнчи общĕствăлă организацисемпе колохозсен, предприйатисен представителĕсен канашлăвне пухăннисем, Буинскăри хăма çуракан савăтри рабочисемпе служăщчисем, инженерла-техникла работниксем тата „11 лет Чувашия“ колхоз колхозникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташа тата Буинскăри хăма çуракан савăтри рабочи стахановĕç Николай Çеменăвич Бодров йулташа кандидата тăратнине пĕтĕмпех ырлатпăр.

2. Иосиф Виссаронăвич Сталин йулташпа Буинскăри хăма çуракан савăтри рабочи стахановĕç Николай Çеменăвич Бодров йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне Йĕпреç суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйсен килĕшӳне пама ыйтатпăр.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Йетĕрне районĕнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ

ЙЕТĔРНЕ (хамăр корр.). Пуху майăн 16-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен ĕçлерĕ. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн ĕçĕсем çинчен А. М. Розанăв йулташ, ПСК(б)П райкомĕн ĕçĕсем çинчен М. Е. Йухтанăв й-ш докладсем турĕç. Отчотсене сӳтсе-йавнă чухне 57 çын тухса каларĕç (пухура пурĕ 150 çын пулнă). Тухса каланă йулташсем пурте партин Чăваш организацийĕ, парти Тĕпкомĕ, çулпуç Сталин йулташ йертсе пынипе, хăйĕн ретĕсене халăх тăшманĕсенчен—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсенчен, сăтăрçăсенчен, диверсантсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернине палăртрĕç.

Парти Обкомĕн кивĕ руководстви массăсене халăх тăшманĕсемпе кĕрешме мобилизацилес вырăнне, халăх тăшманĕсене партипе совет органĕсене лартнă, вĕсене тĕрлĕ майсемпе витсе пурăннă. Вăл, Обкомăн кивĕ руководстви, парторганизацине йурăхсăр метăдпа йертсе пынă, коммуниссене сăлтавсăрах йатланă, кӳрентернĕ, çав йурăхсăр метăд районри парторганизацисене те саралнă пулнă. Обкомăн кивĕ руководствине сирсе пăрахни,—партин Чăваш организацине малашне тата пысăкрах çитĕнӳсем тума çул уçса пачĕ.

Обкомăн тата райкомăн ĕçĕнче йăнăшсем те пулнă. Сăмахран, хăшпĕр тӳрĕ ĕçлекен коммуниссене, елекçĕсем хыççăн кайса, партирен тĕрĕс мар кăларса пăрахнисем пулнă. Çавăн пек йăнăшсем туни малашне ан пултăр тесе коммуниссем çивĕччĕн критиклерĕç.

Районра сăтăрçăсен ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтересси вăраххăн пырат-ха. Йалхуçалăхĕнче — выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес, пусуçаврăнăшĕсене тĕрĕс тăвас тĕлĕшпе, финанс органĕсенче, промышлĕннăçра тата ытти йенĕпе те çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕç коммуниссем.

Тата Вахрамейĕв йулташ хăйĕн сăмахĕнче:

— ПСК(б)П Обкомăн тата райкомăн отчочĕсенче парти вĕрентĕвĕ мĕнле пыни çинчен каламарĕç. Пирĕн халĕ те-ха пропагандиссене тивĕçлипе пăхса çирĕплетмеççĕ, вĕсемпе пачах ĕçлемеççĕ. Парти райкомĕ парти вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсене пăхса тухма палăртсан та, вăл ыйтусене лару вĕçне хăварат, вара вăхăт нумайа кайнипе сӳтсе-йавмасăрах йулни те пулат, — терĕ.

Ĕç чăнах çавнашкал тăни тĕслĕхсенчен аван курăнат. Вăрман хуçалăхĕ çумĕнчи парторганизаци парти вĕрентĕвĕ тĕлĕшпе пачах ĕçлемест. Сăмахран, вăл парторганизацинче тăракан Мартынăв йулташ вĕренекен кружокра 15 зађати пулнă, вăл икĕ зађатине кăна кайнă. Апла пулсан та парторганизаци Мартынăв йулташ çинчен сӳтсе-йавман. Йетĕрне хулинчи колхоз çумĕнчи парторганизацинче те çавнашкалах.

Вахрамейĕв йулташах:

— Районти парти активне вĕрентме организацилени парти шкулĕн зађатийĕсем те нумай хушă пулман. Вăл ĕнтĕ райкомран килет, шкулта зађатисем пулас кун парти райкомĕ актива тĕрлĕ ыйтусемпе йалсене йарат,—терĕ.

ПСК(б)П Обкомĕн парти пропагандипе агитаци пайĕ парткабинетсен пуçлăхĕсемпе ĕçлемест, вĕсене пухса канашлусем тумаст. Обком инструктăрĕсем райкомсенче кăна пулаççĕ, пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсемпе сахал паллашаççĕ. Парти райкомĕ те 1938 çулта парторгсемпе пĕр хут çеç канашлу ирттернĕ тата парторгсемпе ĕçлеме райком секретарĕ час-часах урăх çынсене хушат,—ман шутпа парторгсемпе ĕçлесси—парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн кулленхи ĕçĕ пулса тăмала, парторгсене ĕçре вĕрентсе çитĕнтерсе пымала,—терĕ Боровкова йулташ.

Тухса каланă йулташсем районти прокурорăн Миславский йулташăн ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене хытă тишкерчĕç. Анчах Миславски йулташ критикăна чăтма пултараймаст мĕн. Вăл хăйне критиклекенсене:—„Вĕсем пурте айăпланă çынсем",—терĕ, çапла вăл критикăна хĕсме пăхрĕ. Пуху райкомăн çĕнĕ составне Миславски çинчен уйрăммăн пăхса тухма хушса хăварчĕ.

Пуху хăйĕн решенийĕнче райкомăн çĕнĕ составне пур коммуниссене те парти вĕренĕвне йавăçтарма, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май агитаци ĕçне вăйлатма хушрĕ.

Райкомăн çĕнĕ составĕнче— пĕрремĕш секретар М. Е. Йухтанăв йулташ, иккĕмĕш секретар Албутăв йулташ, виççĕмĕш секретар И. Ф. Йаргунов йулташ. Районри хаçат редакторĕ пулса ĕçлеме А. Л. Лазарĕв йулташа суйланă.

К. Мељникăв.

Райком ĕçне çителĕклĕ тесе хак панă

ТРАК. Майăн 21-мĕшĕнче парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн отчочĕ тăрăх прени пĕтнĕ. Пренире 21 моммунис тухса каласнă. Пренире тухса калаçакансем парти Чăваш Обкомĕ парти тата совет органĕсене хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла-бухаринла фашисла агентсене, буржуалă-националиссене тата вĕсене хӳтĕлекенсемпе сăтăрçăсене тасатас, йертсе пыракан ответлă вырăнсене çĕнĕ кадрсене куçарсалартас йенĕпе пысăк çитĕнӳсем тунине палăртрĕç.

Чăваш парторганизаци пысăк çитĕнӳсем тунине кăтартса панипе пĕрлех, унăн çитменлĕхĕсене те хăйулăн кăтартса пачĕç тухса калакансем. Парти Чăваш Обкомĕ тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес йенĕпе çителĕксĕр ĕçленĕ.

Республикăра промышлĕннăç, суту-илу организацисем çаплах начар ĕçлеççĕ-ха. Ку ĕçе Шупашкарта та тивĕçлипе йĕркелемен. Облаçри организацисем района начар пулăшаççĕ. Парти Чăваш Обкомĕн инструктăрĕсем те йертсе, пулăшса пырас тĕлĕшпе йапăх ĕçлеççĕ. Вĕсем вырăнсенче сахал пулаççĕ. Партработниксем хуçалăхпа политикăла кампани ĕçĕсемпе районра час-часах пулаççĕ, массăла-политикăла ыйтусемпе пит сахал пулаççĕ вара. Çакăн пек ыйтусем çинче чарăнса тăчĕç пренире тухса калаçакансем.

Трак районĕнчи парти пухăвĕ парти Чăваш Обкомĕн политикăла çул-йĕрне тĕрĕс, практикăла ĕçне çителĕклĕ, тесе йышăнса хăварчĕ.

Майăн 21-мĕшĕнчех ПСК(б)П райкомĕн отчотне итленĕ. Майăн 22-мĕшĕнче райком отчочĕ тăрăх прени пĕтнĕ, 39 çын тухса каласнă. Тухса калаçакансем ПСК(б)П райкомĕн ĕçĕсене тата райкомăн уйрăм членĕсене хăйулăн та вăйлăн критиклерĕç. Вĕсем уйрăмах, парти вĕренĕвĕ начар пынине, парти райкомĕ йенчĕн пропагандиссене çителĕксĕр пулăшса пынине кăтартса хăварчĕç. Пропагандиссене лайăх ĕçлеме условисем туса паман, çавна май чылай пропагандиссем кружоксен зађатийĕсене хатĕрленмесĕр пыраççĕ. ПСК(б)П райкомĕ çумĕнчи парти историне вĕренмелли кружокăн пропагандисĕсем час-часах улшăнса тăнă.

Парти райкомĕ районри строительстви ĕçĕпе начар ĕçлет. Упири тата Албахтинари шкулсене, пульницă çурчĕсене тума халĕ те тытăнман. Çавăн пекех парти райкомĕ районри промышлĕннăçпа, суту-илу организацисемпе, районри сывлăха сыхлав ĕçĕсемпе начар йертсе пырат.

Пренире тухса калаçакансем парти райкомĕн уйрăм членĕсене, вĕсем колхозниксене колхозран кăларас ĕçре йăнăшсем тунăшăн критиклерĕç. Упири „Коминтерн", Мартынкасси колхозĕсенче колхозниксене колхозран тĕрĕс мар кăларнă тĕслĕхсем пулнă.

Хăшпĕр учителсене пĕр айăпсăрах та тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех ĕçрен кăларнă. Кун пек тĕслĕхсем Йаманкасси тата Тĕрер шкулĕсенче пулнă.

Çаксемпе пĕрлех пренире тухса калаçакансем районра тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес йенĕпе çителĕклĕ ĕçлеменнине кăтартса хăварчĕç.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ йенĕпе агитацилĕ ĕç сӳрĕккĕн пырат. Ку ĕçе уйрăм вырăнсенче пит йапăх организациленĕ.

Сӳлте асăннă çитменлĕхсене кĕске срукрах пĕтерме хушса хăварчĕ пуху.

Коммуниссен районри пухăвĕ парти райкомĕн политикăла çул-йĕрне тĕрĕс, практикăла ĕçне çителĕклĕ, тесе йышăнчĕ.

Г. Николайĕв.
Закамский.

„Игăрь полкĕ çинчен хунă сăмах" пирки Пушкин асăрхаттарăвĕсем

Вырăссен авалхи художествăлă творчĕствин паха произведенине „Игăр полкĕ çинчен хунă йурăна" вырăссен асл поечĕ Пушкин чи малтан тивĕçлĕ ха панă. Вăл çав произведенири вăйлă образсен калама çук пысăк илемĕпе хавхаланнă, ăна чăнахах та ĕлĕк-ава сырни çинчен иккĕленекен, авалхи памĕтнике хирĕçлекен Каченовский пе скептик-критиксене хирĕç кĕрешнĕ.

Пушкин çак аваллăх памĕтникĕ пирк асăрхаттарса çырнисем халĕ те упранаççĕ. Издателсем вăл çырусене „Игăр полкĕ çинчен хунă сăмах пирки тун асăрхаттарусем" тесе пичетлесе кăларнă. Вĕсенчен пĕринче Пушкин çапл çырнă:

„Хăшпĕр писателĕсем пирĕн поези авалхи памĕтникĕ пирки иккĕленеççĕ ăна ĕлĕк çырнă тенине хирĕç хĕрӳлĕ тавлашаççĕ. Усăлăн йусани ăнланма сынсене çеç арпаштарат, вăл чăн-чă ăстаçăн кусĕсенчен пытаранса йулма пултараймаст... Йурăçăн хăйĕн сăмахĕсемсĕр пусне, урăхла ăнлантару сук. Йурăна чăнахах та ĕлĕк çырни уна аваллăх чĕлхи те лайăх калат. Халĕ ăн ун пек çырма май сук. Пирĕн писателсенчен кам ăна XVIII ĕмĕрте çырма çитĕлĕкле талант тупăр? Карамзин-и? Карамзин поет мар. Державин-и? Державин, Игăрь çинчен çырнă йурăн чĕлхине мар, вырăс чĕлхине те ытлин-çитлин пĕлмен. Ыттисен, пурне пĕтĕмпе илсе те, унăн планĕнче, çапăçусемпе тарнисене çырса кăтартнă вырăнсенчи чухлĕ поези пулман. Паллă мар кђаçĕн ăпăсăр по хочĕ çинчен çакăн пек йурă çырма камăн пусне шухăш кĕме пултартăр? Кам çав йурăри хăшпĕр вырăнсене ка йарахпа летописсенче те халĕ ытт славйанла чĕлхесенче çеç тĕлпулака сăмахсемпе çавăн пек илемлĕн çыр кăтартма пултартăр? Вăл славйанл чĕлхесене пурне пĕлнине пĕлтерĕ п лĕччĕ".

Пушкин чи малтан поемăна ăнла тарса панă. Вăл ку ĕçе сăплахсен т ранлăхне тупса илсе, авалхи поеçи чĕ хин пур йенĕсене те шута илсе. „Игăрь синчен хунă йурăн" поесилĕ сăпăт сене тимлĕн тĕпчесе тухса тупă.

◆

„Игăрь полкĕ çинчен сырнă йуран" йубилейĕ умĕн

„Игăрь полкĕ çинчен çырнă йура" 750 çул тултарнă тĕле Мускаври нумай институтсемпе литературă учрежденийĕсем вырăссен авалхи епăсĕн генилĕ произведенийĕ йачĕпе выставкăсем организацилеççĕ. Интереслă выставкăсенчен пĕри государствăн литературă музейĕнче уçăлат.

Експонатсем çав чаплă произведенине тупнин историйе çинчен каласа параççĕ. Выставкăра поемăн малтанхи изданийĕсем, Кийĕв Руçĕн тата Игăрь кђаçĕн похочĕн карттисем, авалхи Руçăн пурнăçне, економикине тата искусства ӳсĕмне кăтартса паракан материалсем пулаççĕ.

Выставкăна 1000 йахăн експонатсем тăратаççĕ. Ăна ийуњ уйăхĕн вĕçĕнче уçаççĕ.

(ТАСС).

Лайăх ĕçленине палăртрĕç

ТУРХАН, (телефон тăрăх). Майăн 21-мĕшĕнче кунĕпех парти райкомĕн отчочĕ тăрăх прени пычĕ. Пренире тухса калаçма пурĕ 37 çын çырăннăччĕ, 27 çын тухса каласрĕç. Тухса калаçакансем парти райкомĕ çĕнĕ кадрсене ответлă вырăнсене ĕçлеме лартас тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртрĕç. Районра пурĕ парти тата совет органĕсенчи йертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме çĕнĕ кадрсене 24 çын лартнă. Кунпа пĕрлех ĕçри çитменлĕхсене кăтартса пачĕç. Райком пуçламĕш организацисене çителĕклĕ пулăшса пыман. Райком инструктăрĕсем вырăнсенче сахал пулнă, сочувствуйушчисемпе тата çавăн пекех колхозсенчи партире мар актив хушшинче сахал ĕçленĕ.

Майăн 22-мĕшĕнче, ирхи ларура парти Обкомĕ тата райком отчочĕсем тăрăх резољуци йышăнчĕç. Парторганизаци пухăвĕ ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн политикăла çулйĕрне тĕрĕс, кулленхи практикăла ĕçне çителĕклĕ, тесе йышăнчĕ. Пуху çавăн пекех парти райкомĕн политикăла ĕçне тĕрĕс тата практикăла ĕçне çителĕклĕ тесе йышăнчĕ. Резољуцинче парти райкомĕ айăпсăр коммуниссем çинчен елек саракансемпе çителĕксĕр кĕрешнине кăтартса хăварчĕ.

Пуху резољуци йышăннă хыççăн, райком составне тата ревизи комиççи членĕсене тата облаçри конференцине кайма делегатсем суйлама тытăнчĕ.

Алтын-Баш.

Отчот мĕн кăтартрĕ

Турхан районĕнчи пур пуçламĕш организацийĕсенче те ПСК(б)П райкомĕ отчот туса панă. Райком ĕçне сӳтсе-йавас ĕçе коммуниссем питĕ активлăн хутшăнчĕç. Липăвкă йалсовечĕ çумĕнчи пуçламĕш организацинче райком отчотне итленĕ хыççăн, коммуниссем чылайĕшĕ пренире тухса калаçнă. Коммуниссем уйрăмăнах парти райкомĕн инструктăрĕсем вырăнта çителĕклĕ пулăшу паманнине палăртаççĕ.

Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш организацинче коммуниссем: парти райкомĕ, ирĕклĕ организацисемпе (Осоавиахим, МОПР) çителĕклĕ йертсе пыман, ĕçе организацилеме пулăшман тата профсойузсен организацийĕсемпе те çителĕклĕ йертсе пыман, тесе кăтартса хăварчĕç. Илларионăв хăйĕн сăмахĕнче: парти райкомĕ хăйĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе пыманнине тата коммуниссене те уйрăм заданисем парсан, мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе пыманнине кăтартса хăварчĕ.

Йељмаков йулташ парти райкомĕ парти ретне ӳстерессипе çителĕксĕр ĕçлесе пынине кăтартса хăварчĕ.

Вăрман хуçалăхĕ çумĕнчи пуçламĕш организацинче райком ĕçне сахал критикленĕ.

ПСК(б)П райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацинче те райком отчотне хытă критикленĕ. Тухса калаçакансенчен нумайĕшĕ колхозри пĕччен коммуниссемпе райком инструктăрĕсем ĕçлеменнине кăтартса пачĕç.

В. Петров.

Чылай паха ĕçсем турĕç

Турхан районĕнчи хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем йулашки вăхăтра партине илес тĕлĕшпе чылай паха ĕçсем турĕç. Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче (парторг Йељмаков йулташ) 1938 çул пуçланнăранпа парти ретне 5 çынна çĕнĕрен илнĕ, кандидатран члена 2 çынна куçарнă. Липăвкă йалсовечĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче 5 çынна,—районĕпе пурĕ 23 çынна парти ретне илнĕ.

Парти ретне илес йенĕпе ПСК(б)П райкомĕн инструктăрĕсенчен Чекушкин йулташ лайăх ĕçлесе пырат. Унăн участкинче 8 çынна парти ретне илнĕ. Парти ретне илме хатĕрлесе çитернисем татах та пур.

Çав вăхăтрах вăрман хуçалăхĕ çумĕнчи пуçламĕш организацинче парти ретне илес тĕлĕшпе парторг Мартынăв йулташ йапăх ĕçлесе пырат. Кунта пуш халлап çапма йуратаççĕ, ĕçне тумаççĕ. Çак пуçламĕш организаци райком инструктăрĕн Лысинă йулташăн участкине кĕрет. Лысинă йулташ пуçламĕш парторганизацине çителĕклĕ вĕрентсе пулăшса пыман.

В. Петров.

Георгий Шторм

„Игăрь полкĕ çинчен хунă йурă"

XIII-мĕш ĕмĕрте пурăннă паллă мар автăр Руç çĕршывĕнче „уделсем" пулман тапхăр çинчен шухăшласа, хăйĕн тăван çĕршывĕн авалхи хаклăхне тата илемлĕхне йуратупа тулса çиççе тăракан сăмахсемпе çапла çырса хăварнă:

„О, çутăран та çутă, вырăссен ытарма çук çĕрĕ, нумай илемсемпе тулса савăнтарса тăратăн ессĕ: нумай кӳлĕсемпе тата нумай йухан-шывсемпе, чăнкă тусемпе, çӳлĕ сăртсемпе, таса вăрмансемпе, тĕлĕнмеле уй-хирсемпе, тĕрлĕрен тискер кайăксемпе, ним шутсăр вĕçен-кайăксемпе, аслă хуласемпе, тĕлĕнмеле йалсемпе, харсăр кђаççемпе... Пуринпе те тулнă вырăс çĕрĕ..."

Венгерсем таран, „чахсемпе ђахсем" таран, йатвагсемпе Литва таран, малала —шведсем таран, Инçетри Çурçĕрти „сывлакан" тĕтрелĕ тинĕс таран, унтан вара Атăл сывăхĕнче пурăнакан пулхăрсем, мордвасем тата марисем таран сарăлса выртаççĕ вырăс кђаçĕсем тытса тăракан çĕрсем. „Ун чухне, — тет автăр, — венгерсем, ăнсăртран Владимир Мономах пырса ан кĕтĕр тесе, хăйĕн чул хулисене тимĕр хапхасемпе çирĕплетнĕ. Ђарь-градри Мануил, Владимиртен шикленсе, хăйĕн хулине тытса ан илтĕр тесе, ун патне хаклă парнесем йарса тăнă..."

Анчах, кайран пурте улшăннă. Уйрăм кђажĕствăсем пулса вакланса пĕтнĕ Кийĕв государствинче кђаçсем пĕр-пĕринпе вăрçма пуçланă. Кђаçсем хушшинчи вĕçĕмсĕр пулса пыракан вăрçăн вутĕнче хуласемпе йалсем нумай çунса кĕлленнĕ. Çав вăхăтра çирĕпленнĕ, кăнтăр йенче пурăнакан половецсем час-часах тапăнса, Вырăс çĕрĕн тустаруне вĕçлесе пынă.

Унччен, кђаçсем пĕрлешсе, кочевниксене çĕнтерсе пурăннă. Анчах кђаççен сыхăнăвĕ нумай вăхăта пыман: кайран вĕсенчен кашни хăйшĕн „мухтав тата чыс" илессишĕн тăрăшма пуçланă.

Хăш чухне кђаçсем половецсене хирĕç кайма та килĕшмесĕр тăнă, кун пек чухне вара халăх хăй хĕçпăшал пама тата похода тухма ыйтнă. 1068 çулта Кийĕвра çавăн пек пулнă, ахаљ çынсем Изйаслав кђаçăн çурчĕ умĕнче çапла каласа „тилмĕрнĕ": „Половецсем пирĕн çĕршыв тăрăх сапаланнă, кђаç, пар утсем, хĕçпăшалсем пар, вĕсемпе çапăçăпăр вара епĕр!"

XII-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче Новгород-Северскийĕн кђаçĕ Игăрь хăй тĕлĕн похода тухнă.

Вырăссен авалхи паллă мар поечĕ çак событи çинчен наци тата пĕтĕм тĕнче литературин аслă памĕтникĕ пулса тăракан, паттăрлăх çинчен калакан йурăна çырнă. Халĕ совет халăхĕ вăл йурăна çырнăранпа 750 çул тултарнине уйав туса паллă тăват.

II.

1185-мĕш çул. Çуркуннехи вăхăтăн вĕçĕ. Хĕвелпе пиçĕхнĕ шђахсем (çулсем) тусанпа мăкăрланса выртаççĕ. Игăрь Свйатославăвич йертсе пынипе çурçĕрти кђаççен дружинисем Дон сывăхĕнчи çеçен хире половецсенчен туртса илме кайаççĕ.

XI-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш пайĕнче кочевниксем мĕн авалтанпа вырăссен пулнă çĕрсене—Дон тăрăхне, Тамађ-çурмаутравне тата Тмутаракађ кђажĕствине тытса илнĕ...

Çурçĕр кђаçĕсем, хăйсене хăравçăсăр тытса тата хăйсен вăйне шанса, „аслă" кђаçран, Кийĕври Çватославран тата вырăссен ытти кђаçĕсенчен килĕшӳ илмесĕрех, çапăçăва уйрăм тухма шухăшланă.

Хĕвел тĕттĕмленнине кура çар Донец сыранĕ хĕрринче чарăнса тăрат. Анчах. Игăрь, „тыткăна лекиччен, вилни аванрах" тесе, хăйĕн çарне уйхир тĕттĕмлĕхĕнчен тухакан хăрушлăха хирĕç малала илсе кайат.

Вырăс воннĕсем харсăррăн малала кайаççĕ. Сырма-тĕрмесенче кашкăрсем улаççĕ, тилĕсем тарăхулăн вĕреççĕ, тăван çĕр тĕмесем хысĕнче тăрса йулат.

Половецсем
Халиччен сӳремен çулпала
Аслă Дон патне васкаççĕ;
Вĕсен урапасем сурçĕрте чĕриклетеççĕ—
Калăн—
Хăратса йанă акăшсем, тесе.
Игăрь çарĕсемпе
Дон çине çул тытат.
Ĕнтĕ ун инкекĕсене йуманлăх тăрăх
Кайăксем астуса тăраççĕ;
Сырмасем тăрăх кашкăрсем
Аслатийе чĕнеççĕ;
Амăрткайăксем вил шăмми çине
Тискер-кайăксене йыхăраççĕ;
Йĕм-хĕрлĕ шчита хирĕç
Тилĕ суйа сарат...
О, манăн Вырăс çĕршывĕ!
Есĕ хыçра ĕнтĕ,
Тĕмесем хысĕнче!

Вăраха тăсăлат çĕрлехи вăхăт. Вырăссем, хăйсен лагĕрне хĕрлĕ шчитсемпе хӳмелесе, çĕр выртма чарăнаççĕ. Тул çутăлса килнĕ чухне вĕсем половецсен отрйачĕпе тĕлпулаççĕ, ăна çĕмĕрсе тăкаççĕ, çав тери нумай ырă йапаласем туртса илеççĕ, ушахсемпе шыв кӳленчĕкĕсем урлă та тăшмансенчен туртса илнĕ йапаласемпе кĕпер хываççĕ!

Ерцекун ир-ирех
Половецсен ирсĕр çарĕсене
Таптаса тăкрĕç;
Унтан, çĕмренсем пек сапаланса,
Половецсен хитре хĕрĕсене
Хуса кайрĕç хир тăрăх,
Вĕсемпе пĕрлех ылттăн та,
Хаклă пурçăн йăпăркасем те
Илсе карĕç.
Пĕленсемпе, пĕркенчĕксемпе,
Сăрансемпеле,
Половцсен ытти нумай ерешĕсемпе
Шурлăхсем тăрăх, пылчăк тăрăх
Кĕперсем хывма пуçларĕç.

Çакă çĕнтерӳпе хавасланнă вырăс кђаçĕсем Дон урлă Тмутаракађа кайса, унта, „Половецсен хирĕн вĕçĕнче", тăшмана ĕмĕрлĕхех çĕмĕрсе тăкма шутлаççĕ. Анчах „Сокăл нит шала кĕрсе кайрĕ, кайăксене тинĕс патне хӳтерсе!" — çурçĕр кђаçĕсемпе вĕсен паттăр çарĕсем хăйсен харсăр паттăрлăхĕпе ытлашши хавхаланнă.

Тепĕр кунхи ир вырăссем половецсен хирĕн варринче тăрса йулаççĕ. Вĕсене пур йенчен те кочевниксен ордисем çавăрса илеççĕ.

Пулатех хăйар аслати!
Аслă Дон йенчен çăватех
Çĕмренсем тăкăннă пек çăмăр!
Сăнăсем те хуçăлса пĕтĕç ун чух,
Хĕççем те мăкалĕç ун чух
Половецсен шеломĕсене çапăнса
Кайал шывĕ çинĕнче,
Аслă Дон патĕнче:
Çĕршыв кĕрлет,
Шывсем пăтранса йухаççĕ,
Хирсем тусанпа витĕнеççĕ,
Йалавсем вĕлтĕртетеççĕ.

Кунĕн-çĕрĕн вĕрет хăйар çапăçу. Игăрь шăлнĕ, Всеволод, Курскпа Трубчевск кђаçĕ, хăй аманнă пулсан та, „йар-тур" пек паттăррăн çапăçат. Хăйсен паттăрлăхĕпе Игăрь та, йавăрлăха чăтăмлăн тӳссе ирттерекен дружинă та унтан кайа йулмаççĕ.

Акă иккĕмĕш кунĕнче „ковуйсем" (Чернигăвă кђажĕствинче вырнаçса пурăнакан мирлĕ тӳрксене çапла каланă. Игăрĕн дружинин пĕр пайĕ вĕсенчен тытăнса тăнă) тăшман хĕстерĕвне тӳссе тăраймаççĕ, кайала чакма пуçлаççĕ. Игăрь, вĕсене тытса чарас шутпа, вĕсем патне вĕçтерсе пырат, анчах вĕсем ăна паллаçа илеймеççĕ, çаплах тараççĕ.

Игăрь хăйĕн дружини патне кайнă чухне тыткăна лекет.

III.

Половецсем, çынсене тыткăна илсе, выљăх-чĕрлĕхсене хăвалаçа кайса, Ру çĕршывне шалала кĕрсе пынă: хăйсе çулне пушарсен сутипе паллă туса ха варнă. Кђаççем кочевниксемпе кĕрешм пăрахнă, мĕншĕн тесен, вĕсем хушшинчи кивĕ хирĕçӳсем халичченхинче те ытларах вăйланнă:

Тăван тăвапа:
„Ак ку — манăн, ку та манăнах
Теме пуçланă вĕсем.
Пĕчĕк йапала çинченех
„Ку аслă" тесе пуçланă
Кђаççем калаçма.
Хăйсемпе хăйсемех
Харкашнă.

Çав вăхăтра халăх Руç çĕршыв пĕрлĕхĕшĕн каласнă.

Çурçĕр кђаçĕсен половецсене хирĕ пулса иртнĕ похочĕ хыççăн часах, ха лăхсен пĕтĕм вăйне пĕрлештерме хĕ рӳлĕн чĕнекен çак йурăна, „Игăрь пол кĕ çинчен хунă йурăна" çырнă...

Çĕршыва сыхлама чĕнни Кийĕври Çватославăн „ылттăн сăмахĕ"—паттăрлăх йуррипче тĕп вырăн йышăнат. Вăл—вырăссен авалхи патриочĕн „ку суљпе хутшăннă, хумханулă сăмахĕ унăн кашни йĕрки тăван çĕре пĕрлĕхл тытас кăмăлпа тулнă.

Çватослав Çурçĕрти „кĕçĕн" кђаççене пит хурланса йатлат. Питĕ пуçланă вĕсем „хăйсеке вађђи ча ђырама", вĕсен айăпĕпе ĕнтĕ Перейаславĕл кђажĕстви тустарăнчĕ, вĕсен айăпĕпе ĕнтĕ Рим хули сывăхĕнчи халă половецсен хĕççисем айĕнче йăнăшат, вĕсен айăпĕпе ĕнтĕ йывăр аманнă Владимир Глебович кђаç вилет. Вырăс çĕрне никам та çĕнтерме пултарас çукки

(Йулашки 4-мĕш страницăра).



„Игăрь полкĕ çинчен хунă йурă" 750 çул тултарнă тĕле.

УКЕРЧĔК СИНЧЕ: 1854 çулта кăларнă „Игăрь полкĕ çинчен хунă йурăн" (Николай Гербел куçарнă) 5-мĕш йуррине илемлетсе кăтартса Зичи художник ӳкернĕ картинă (1853 ç.).

(Союзфото).

Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн генераљнăй совет çеççийĕн решенийĕ

Осло хулинче (Норвеги) профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешевĕн генераљнăй совечĕн çеççийĕ пырат. Майăн 19 мĕшĕнче çеççире совет профсойузĕсем çав пĕрлешĕве кĕресси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе-йавнă. Профсойузсен пĕрлĕхне хирĕç тăракансем çакна кăтартса панă: вĕсем фашисăма хирĕç кĕрешме мар, йăлтах урăхла, вĕсем фашисăм интересĕсемшĕн пролетариле ретсене сиресире йама хатĕрленеççĕ. Бељги профсойузĕсен представителĕ Мертенс хайĕн сăмахĕнче çапла каланă: „совет профсойузĕсене „профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвне“ илни çав пĕрлешĕве салатса йарасси патне илсе пыни пулĕччĕ, мĕншĕн тесен совет профсойузĕсем унта йĕртсе пыракансем пулса тăрĕччĕç“,—тенĕ. Çакă вăл ССР Союзĕ çинчен тата совет профсойузĕсем çинчен йаланхи пекех елеклени пулса тăрат те ентĕ. Швейцари тата Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен профсойуз представителĕсем совет профсойузĕсем вăл пĕрлешĕве кĕрсен, вара вĕсем унтан тухассипе хăратнă.

Çакăн хыççăн генераљнăй совет çеççинче пулнисен реакцилĕ ушкăнĕ—Голланди, Пољшă, Бељги, Швеци тата Америкă профсойузĕсен представителĕсем малашне совет профсойузĕсемпе калаçусем тăвассине чарма сĕнӳ панă. Франци делегацийĕ çав калаçусене малашне те туса пырасси çинчен сĕнӳ панă. Сасăласан резуљтатсем çапла пулнă: малтанхи сĕнӳшĕн 14-ăн сасăланă, иккĕмĕш сĕнӳшĕн—Франци делегацин калаçусене малашне те туса пырасси çинчен панă сĕнĕвĕшĕн—7 сасăланă, урăхла каласан, ун майлă Франци, Испани, Мексикă, Норвеги тата Чехословаки делегачĕсем сасăланă.

Франци делегацийĕ панă сĕнӳшĕн сасăлакансем профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн пĕтĕм членĕсенчен çуррине йахăн шутланат.

(ТАСС).

Китай самољочĕсем Йапони хулисем çине тапăнни

Майăн 20-мĕшĕнче ирхине Китай самољочĕсен ескадрилли Нагасаки, Фукуска, Сасебо хулисем çине тата Йапонин кăнтăр-хĕвеланăç йенчи ытти пунктсем çине тапăнса, нумай листовкăсем пăрахнă. Вĕçев ултă сехет хушши пынă. Кайала вĕççе килне чухне самољотсене Йапонин çар суднисен зенитла орудийĕсенчен пенĕ. Хаљкоу аеродромĕнче кăнтăрла малтанхи хут Йапоние вĕççе кайса ним çухатусăр таврăннă Китай љотчикĕсене чапла кĕтсе илнĕ.

Вĕççе таврăннă љочиксене саламласа, Китайăн ĕçтăвакан йуанĕ (палатă) председателĕ Кун Çин-си,—„ăнăçлăн вĕçни Китай авиацин техники Йапонинчен кайа маррине кăтартат“, тесе каланă.

— Пайан, Китай авиацийĕ Йапони хулисем çине бомбăсем пăрахма пултарнине кăтартса паче, анчах епĕр ку етемлĕхĕн тискерлĕхне тумастпăр. Пирĕн тăшман—Йапони милитарисĕсем, анчах Йапони халăхĕ мар“.

Љотчиксене ăшшăн кĕтсе илни пĕтĕм халăхăн савăнăçĕ пулнă.

(ТАСС).

Йапони офицерĕсем китайĕцсем йенне куçаççĕ

Майăн 18-мĕшĕнче Йапони лейтенанчĕ Хирота (кавалери отрйачĕсен командуйушчийĕ) Цассйаљ (Шаљдун провинцин кăнтăр пайĕ) патĕнче пулса иртнĕ çапăçу вăхăтĕнче Китай йенне куçнă. Çав кунах Йапонин тепĕр офицерĕ китайĕцсен малти позицине автомобиљпе пынă та китайĕцсене паранма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ. Çак икĕ офицера йатарласах хăвăрт допрос тунă. Хирота лейтенант Китай йенне куçнине вăрçас килменнипе ăнлантарнă. Вăрçăччен вăл учител пулса ĕçленĕ.

(ТАСС).

Чехословакири пĕрлĕх фрончĕн çитĕнĕвĕ

Чехословаки компартийĕ хыттăн тăрăшса ĕçленипе, муниципалитет суйлавĕсем тĕлне чылай вырăнсенче пĕрлĕх фронтне туса хунă. Судето-Нимĕç облаçĕнчи чылай пысăк пунктсенче коммуниссемпе нимĕç социал-демократсем суйлавсенче пĕрлĕх спискипе тухаççĕ. Чехин çурçĕр тата çурçĕрпе хĕвелтухăç пайĕнче 15 пунктра коммуниссемпе социал-демократсем хушшинче суйлав умĕнхи кампанине пĕрле иртерес тĕлĕшпе килĕшӳ тунă.

(ТАСС).

Мадридри шпионсене суд туни

Мадридри спецтрибунал Хозе Сестас тата унăн ушкăнĕнчи 20 çынăн шпионла ĕçĕсем тăрăх приговăр йышăннă. Суд çакна тупса палартнă: Хозе Сестас Мадрида Франко агенчĕсем йатарласа панă задани тăрăх шпионла организаци тăвас тĕллевпе пырса кĕнĕ.

Хозе Сестаса тата унăн шпионла ушкăнĕнчи пĕркаварлисене персе вĕлермеле тунă.

(ТАСС).

КĔСКЕН

— Майăн 17-мĕшĕнче Лондăнра митинг пулса иртнĕ, унта мĕн пур партисен представителĕсем пулнă. Ана Абиссини халăхĕн Италин захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен кĕрешӳпе пĕр шухăшлă пулас паллăна пухнă.

— Германири пир-авăр тĕртекен промышленнăçлă чылай районсенчи рабочисене ĕçрен массăлан кăларса йараççĕ, тата та тулли мар ĕç ерни тăваççĕ.

Пир-авăр тĕртекен промышленнăçри пысăк районра—Франгенбергра йулашки уйăх хушшинче ĕççĕр йулнисен хисепĕ 2.530 çын ӳснĕ.

— Индире Каунпор хулинче ĕç укçине хăпартма килĕшменнисене хирĕçлесе 30 пин рабочи забастовкă тăват. Бихар провинцинче пахăр тата тăхлан промышленнăçĕнчи рабочисем 10 пин çын забастовкă тăват. Забастовкăсемпе пăлханусем Индин ытти районĕсенче те пулса иртеççĕ. (ТАСС).

ССРС Тĕп автомобил клубĕнче (Мускав) хĕрарăмсен мото-командине организациленĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: МЭМИТ студентки Даниловскайа (варринче тăрат), хĕрарăмсен мото-командăри чи лайăххисенчен пĕри, çамрăк мотоциклиссене мотоциклетпа мĕнле çӳремелли çинчен хайĕн опычĕпе паллаштарат.

Б. Вељйашĕв фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Ăмăрту догăвăрне тĕрĕслени мĕн кăтартрĕ

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе Шăхасан районĕ Канаш районĕпе ăмăртса ĕçлет. Майăн 15 мĕшĕнче, çуракине вĕçленĕ хыççăн, Шăхасан районĕн представителĕсем Канаш районне кайса ăмăрту догăвăрне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслерĕç. Бригадă Канаш райçĕрĕç пайĕн представителĕпе пĕрле 3 колхозра тата 3 трактăр бригадинче пулнă. Тĕрĕслӳ çуракине иртерес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ.

Шăхасан районĕнчен пынă бригадă Канаш райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Николайĕвшăн кĕтмен çĕртен сиксе тухнă бригадă пулнă. Вăл ăмăрту догăвăрне тунине те манса кайнă мĕн. Çавăнпа бригадă пырса кĕрсен вăл:

— Есĕр мĕншĕн малтан пĕлтермесĕрех килтĕр!—тесе хунă.

Ăмăрту догăвăрĕ тăрăх Шăхасан районĕ те, Канаш районĕ те çуракинче тĕштырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтерме пулнă.

Канаш райçĕрĕç пайĕпе МТС пуçлăхĕсем „епĕр догăвăрта асăннă хашпĕр пунктсене пурнăçланă“, тесе каласа лăплантарасшăн пулчĕç Çавăнпа та район руководителĕсем:—Пайанхи куна пирĕн районра тĕштырăсене акса пĕтернĕ. Уйра ĕçлекенсем пулсан—вĕсем çерулмисем лартаççĕ, йе кăшмансем акаççĕ,—тесе пĕлтерчĕç бригадăна.

Бригадă çавăн хыççăн колхозсене тухса, вĕсен ĕçĕсемпе паллашасшăн пулчĕ. Вăтапуç колхозĕн уйне çитсен, райçĕрĕç пайĕнче тĕрĕс каламанни курăнчĕ. Вăтапуçсем акса пĕтермен. Вĕсен тата 12 гектар акмалли йулнă.

Уйпа кашт малала кайсан, пăрçа акнă вырăн тухат. Анчах темшĕн пăрçисем пурте çиелтех, тата шӳсе çурала-çурала кайнă. Ыйтса пĕлнĕ тăрăх çакă паларат: пăрçана суха айне тумасăрах кĕркунне çĕртме сухаланă çĕре çуркунне тепĕр хут сухаламасăр акнă та, çийенчех çӳрелсе хăвараймаи. Вĕсем вăрлăха йаровизацилес плана та тултарман, 55 гектар акмалăх вăрлăха йаровизацилемеле пулнă пулсан, 5 гектар акмалăх йаровизациленĕ.

Ака тата „Ăмăрту“ колхоз уйĕ. Райçĕр пайĕнче каланă тăрăх ку колхоз та тĕштырă акса пĕтернĕ. Анчах висĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Райçĕрĕç пайĕн представителĕ:—Вĕсем çĕрулми лартаççĕ, вĕсем патне кĕрсе тăрас мар,—тет. Ĕçленĕ çĕре çитсен—унта çĕрулми лартмаççĕ мĕн, виççĕмĕш бригадă сĕлĕпе йасмăк акат, 1-мĕшпе 2-мĕш бригадăсем (викă) акаççĕ. Акмалли сĕлĕ вăрлăхне формалинпа чӳкемен, йаровизацилемен те. Висĕ бригади те сӳре айне çеç акаççĕ.

Ку колхоз уйĕнче трактăриссен 5 мĕш бригади ĕçлет. Трактăриссем каланă тăрăх, пĕр трактăрĕ висĕ кун ĕнтĕ подтăшкăра ларат. Колхозниксем каланă тăрăх, вăл трактăр уйа тухнăранпа та йĕркеллĕ ĕçлесе курман.

Кармами колхозĕнче ĕç аванрах пыни курăнчĕ. Вĕсем те акса пĕтермен. Анчах ĕçе тĕплĕ тăваççĕ. Кунта тулă акаççĕ.

Канаш районĕнче аван ĕçлекен колхозсем, аван ĕçлекен колхоз председателĕсем, бригадирĕсем, йалхуçалăх стахановцисем сахал мар. Анчах районри организацин пуçлăхĕсем çав аван ĕçсен тĕслĕхĕсене пур колхоза та çитермен. Çакă вăл çураки ĕçĕпе çителеклĕ тарăн йĕртсе пыманнинчен килнĕ.

С. Соколов.

Йединоличниксене йĕртсе пымаççĕ

ЙĔТĔРНЕ. Районта йединоличниксем хушшинче ĕçлесси ытла та йăпăх вырăнта тăрат. Йединоличниксем иртнĕ çулти пекех кăçал та çуракине хатĕрленмесĕрех, майăн 15—16-мĕшĕсенче çеç тухрĕç. Кунта акана суха пуçĕпе туса агротехникăна пăсни те уççăнах курăнат. Çавнашкалах Кăтăш йаленче те йединоличниксем акана 5 сантиметр тарăнĕш сухаласа акнă. Акма йурăхла мар вăрлăхсем акнă.

Уйкас Асламасри Васильĕв Петр йединоличник ку тăринчен те акана тухман.

Тĕштырăсене акассипе те агротехникă кăтартăвĕсене пăсса акрĕç. Районри йединоличниксем 8 гектар çинче клевер сӳреленĕ, кĕр калчинене пĕр гектар та сӳрелемен. Йединоличниксене йĕртсе пырас тĕлĕшпе райçĕрĕç пай пуçлăхĕ Йегорăв та, райçĕрĕç пайĕн ытти работникĕсем те интересленмеççĕ. Вĕсем йединоличниксем миçе гектар çине çуртырисем акнине те пĕлмеççĕ.

Ник. Цветков.

Ачасен çулахи канăвне лайăх йĕркелер

Шкул ачисен çулахи каникулĕ пуçланас вăхăт инçе йулмарĕ. Вĕренекенсен çулахи канăвне организацилесси—пысăк ĕç. Çак ĕçĕн ответлăхĕ уйрăмах комсомолпа çутĕç органĕсем çине ӳкет. Комсомол организацисен, профсойузсене тата колхозсемпе хуçалăх организацисене йавăçтарса, пионер лагерĕсем уçас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тумала. Анчах та комсомол организацисем ку йенĕпе начар ĕçлеççĕ-ха.

Йĕпреç районĕнче лагере 214 ачана илсе тухма палăртнă. Ку ĕçе тума мĕнпурĕ 24 пин тенкĕ укçа кирлĕ. Пайанхи кун тĕлне районра пĕр пус укçа та пухман. Колхозсемпе догăвăрсем тăвас ĕçе те майăн 7-мĕшĕнче тин тытăннă. Комсомол райкомĕ ку ĕçрен айаккала пăрăнса тăнă. Канаш райкомол çекретарĕ Куçмин йулташ сăмахĕнчен те туйса илме пулат. Лагере хатĕрленес ĕç начар пыни çинчен каласан, вăл çапла ответлет:

— Комсомол хуçалăх ĕçĕсемпе ĕçлемест. Лагере хатĕрленес ĕçе хуçалăх организацисен тумала. Догăвăр тăвасси те пирĕн ĕç мар.

Çапла ĕнтĕ, райкомол „хуçалăх“ ĕçĕпе сыхланса кайасран хăраса, пĕтĕм ĕçе райçутĕç пайĕн пуçлăхĕ Шипатăв йулташ çине хунă. Районри ытти организацисене йавăçтарман.

Шăмăршă районĕнче пушшех те начар. Районра лагере хатĕрленес тĕлĕшпе комиççи тунă та, лăпланса ларнă. Лагер комиççин председателне те уйăрман. Комсомол райкомĕ ку йенĕпе пачах ĕçлемест. Райкомра пионер йенĕпе ĕçлекен работник çук, хам ĕлкĕрейместĕп,—тет райком çекретарĕ Воронцова йулташ.

Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем ачасен çулахи канăвне организацилес ĕç мĕнле пынипе сахал интересленеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Йĕпреç тата Шăмăршă районĕсенче ку ĕçе пачах хуçасăрлатнă.

Комсомол Чăваш Обкомĕн пионер лагерĕсем уçас ĕçре райкомсене татăклăн пулăшмалă. Пионер лагерĕсенче ĕçлеме ачасене тĕрĕс воспитани пама пултаракан çирĕп комсомолецсене уйăрса памала. Колхозсемпе догăвăрсем тăвас ĕçе васкатмала. Профсойуз тата хуçалăх организацисен те хайсене тивĕçлине тумала.

М. Митрофанăв.

ХРОНИКĂ

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Павăл Павлăвич Лобанăв йулташа РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ пулма çирĕплетнĕ.—Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Алексей Дмитрийевич Ступăв йулташа РСФСР Тĕштырă совхозĕсен тата выљăх-чĕрлĕх ĕрчетекен совхозсен Халăх Комиссарĕ пулма çирĕплетнĕ.

— ССРС Прокурорĕ А. Й. Вышинский йулташ Çар Аслă Прокурорĕн Помошникне—бригçарйурисне М. И. Панкратйев йулташа Çар прокуратуринчи ĕçрен хăтарса РСФСР Прокурорĕ пулма лартнă. (ТАСС).

„Шчорс“ кинофиљм

КИЙĔВ, майăн 19-мĕш. (ТАСС). „Шчорс“ йатлă историлĕ-революцилĕ илемлĕ фиљма ӳкерсе пĕтереççĕ. Хаљчи йавăр сценăсене ӳкерсе ситернĕ те ĕнтĕ.

Ийуљ уйăхĕн варринче фиљм ӳкерекен коллектив фиљма ӳкерме „Шчорс“ дивизин историлĕ çапăçăвĕсем пулнă вырăнсене—Бердичĕва тата Винницăна тухса кайат.

Фиљма вырăс тата украинă чĕлхипе кăлараççĕ, вăл кăçалхи декабĕр уйăхĕ тĕлне хатĕр пулат.

Чехословаки телеграф агенстви пĕлтерни

ПРАГА, майăн 21-мĕш. (ТАСС). Чехословаки агенстви çапла пĕлтерет: „Пайан ирхине ирех Шебрен Гољдберга кайакан çулпа икĕ çын мотоциклсемпе питĕ хыттăн пынă. Полици агенчĕ хайсен машинĕсене чарччĕр тесе, мотоциклисене икĕ хутчен хушнă. Çакăн хыççăн, мотоциклиссем тата хăвăртрах кайма тытăнса, машинĕсене полици агенчĕ çине тытнă. Лешĕ вара, мотоциклсем айне пулас мар тесе, айакала пăраннă. Полици агенчĕ, машинăна чарма хăтланса, машина урапине тĕллесе пăшалран пенĕ. Çул кукăр-макăр пулнипе пулĕ мотоциклиссене тивнĕ те вĕсене вилмелех амантнă. Вĕсенчен пĕри çав çултан инçех мар ларакан казармăра, пољницăра, вилнĕ, тепри Шебгоспитăљĕнче вилнĕ. Çав мотоциклиссем Судет нимĕçĕсем пулнă. Вĕсен хушамачĕсем—Гофман тата Бем“.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР

Шупашкарти кооперативлă вăрман промысли ертелĕн
ГОЛОДЙАИХĂРИ хăма çуракан САВĂТНЕ (Атăл леш йенĕ)
Бухгалтĕр кирлĕ
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх. Хваттер, вутă, шанк, çутă пур.
Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: г. Чебоксары, ул. Заводскайа дом № 10 (Зелены базар) Леспромартель.

Пайан театрсенче.
КИНО театрта
Сасла, илемлĕ, çĕнĕ фиљм
На северном полюсе
программăра 4 тата 5 № кино-журналсем
Орденоносная Чувашия

Електрополомăн Горькинчи уйрăмне
лини çинче пăралук карнă çĕрте ĕçлекен
електромонтĕрсем
тата лини çинче ĕçлеме
платниксем кирлĕ
Горькине çитме çул укçи тӳлеççĕ.
Обшчежити пур.
Çак адрĕспе пымала: г. Горький, Октябрьская, 17.
3—2

Главнефтесбытăн
Чăваш республикĕнчи кантурне
Йалан ĕçлеме
Аслă бухгалтĕр заместителĕ
Бухгалтĕр-финансист
Бухгалтĕр (тавар группи тăрăх)
Бухгалтĕр (расчот группи тăрăх)
КИРЛĔ
Ĕç укçи килĕшӳ тăрăх.
104-мĕш № телефонпа ыйтса пĕлмеле
2—2

Чăвашполиграфтрестăн 1-мĕш № типографине
текст наборлама
НАБОРШЧИКСЕМ
КИРЛĔ
Ĕç укçи ĕçленĕ тăрăх. Пĕччĕнсене вађăй хватерсем пур.
ДИРЕКЦИ.
2—2

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА
малтан ĕçлесе пурăннă рабочисене—ĕçукçи илейменнисене
укçа илме пыма чĕнеççĕ
Укçа илме рабочин хайĕн пымала йе почтă урлă сыруна хăш вăхăтра, мĕнле строителствăра, хăш бригадăра тата килти тĕрĕс адресе тĕплĕн çырса пĕлтерсен, (пĕрлех мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартакан расчот кĕнекине йе расчот хутне йамала), укçа йараççĕ.
Претензисем тăратмалли срук çак пĕлтерӳ çапанна кунранпа 1938 çулхи октябĕрĕн 1-мĕшĕччен.
Чăвашстройтрест.
3—1

„Игăрь полкĕ çинчен хунă йурă“

(Йулашки)

ĕненнине çапла пулнă Сватославăн ылттăн сăмахĕ“. Вăл вакă кнјажĕствăсене пĕрлештересси. Руç никам çĕнтермеле мар вăйлă пуласси пĕлет, мĕншĕн тесен, вырăс дружинĕсем хăватлă, нумай кнјаçсем вăйлă пулнă. Çавăн пек пулнă Суздаљ кнјаçĕ, нумай походсен геройĕ. Атăл çывăхĕнче пурăнакан пулхăрсене çĕнтерекен Всеволод. Вăл пулнă пулсан, половецсене çăмăллăнах çĕмĕрсе тăкнă пулĕччĕ. Атăл шывне весласемпе сирпĕтсе пĕтерме, Дон шывне хайĕн çарĕн шеломĕсемпе ăсса пĕтерме те ăна йывăр мар.

„Угор (Карпат) тăвĕсене хайĕн хурçă пек çирĕп дружинĕпе çавăрса илнĕ. Венгер кнјаçĕн тинĕсе тухмалли шыв çулне—Дунайа хупса лартнă Иарослав Галицкий те çавăн пек пулнă. Унăн сутуçă караванĕсем тӳсем çинчи çулсемпе çӳреççĕ. Унăн çарĕ Византире туркĕсемпе çапăçат. Унăн кнјажĕствин хапхисем витĕр Кийĕв çĕрĕшĕн хĕвелтухăçне кайма çул уçă тăрат.

Сватослав пур кнјаçсене те хайсен паттăрлăхĕ çинчен астутарса, „çак вăхăт кӳренĕвĕшĕн, Вырăс çĕршывĕшĕн, йĕнер çине ларма“ ыйтса, тăван çĕршыва тăшмансен тапăнăвĕнчен сыхлама чĕнет.

IV.

Игăрь тыткăнра тертленет... Унăн арăмĕ, Ефросинийа Иарославнă, Иарослав Галицкийĕн хĕрĕ, Путивĕл хулин хӳми çинче макăрат.

Вăл çилпе, хĕвелпе çеçен хирте вырăс çарне шеллеменшĕн питлет. Днепăртан вăл хумсем çинче сиктерсе савнă упăшкине хай патне илсе килме ыйтат. Çак авалхи вырăс хĕрарăмĕн сăн-сăпачĕ калама çук лайăх, вăл уйрăм çын хурлăхне тăван çĕршыва сыхлакансем çинчен хурланинне пĕрлештерет.

Ирех йĕрет-çке Иарославнă
Путивĕл хӳми çинче
Çапла калаçа:
О, çилĕм-çунатăм!
Мĕншĕн ес, пӳлĕхçĕм,
Хистевлĕн вĕрен?
Мĕншĕн лăпкă çунатусемпе
Ман тусăн çарĕсем çине
Ирсĕр çĕмренсем вăркăтан?
Çитместчĕ-им сана
Сӳлĕ пĕлĕт çинче вĕçнипе,
Кăвак тинĕс çинче
Карапсене хумхантарнипе?
Мĕншĕн ес, пӳлĕхçĕм,
Кăлкан тăрăх вĕрсе салатрăн
Манăн савăнăçăма?..
О, Днепăр Славутил!
Çитерсемчĕ ес, пӳлĕхçĕм,
Ман мăшăра хам пата.
Ирхи шуçăм килнĕ вăхăтра
Еп ун йатне асăнайса
Тинĕсе куççуль йухтарам мар...

V.

Çак паттăрлăх çинчен сăвăланă йурă калама çук илемлĕ те вăйлă сăнлăхсемпе кăтартса панă патриотисăм вăйхалĕпе тата лирикăпа тулнă. Вăл хай пурăннă тапхăрти литературăна лайăх пĕлекен тата çав вăхăтрах халăхăн поесилĕ чĕлхин пуйанлăхĕнчи сăнлăхсемпе, танлăштарусемпе тата сăмах çаврăнăшĕсемпе анлăн усă куракан автăрăн произведенийĕ пулса тăрат.

„Игăрь полкĕ çинчен хунă йурă“ хайĕн художествăлă пахалăхĕпе тĕнче литературин чи аслă произведенийĕсемпе „Роланд çинчен сырнă йурăпа“ тата Шота Руставели сырнă „Тигăр тирĕпе пĕркеннĕ витăçпа“ пĕр хисепре тăрат. Вăл аслă вырăс халăхĕн ĕлĕк-авалах творчĕствăлă пысăк вăй пулни çинчен калат.

Вăл кайарахпа пулса пынă вырăс литературине пысăк йĕр хăварнă. XV-мĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнчи памятнике—„Задоншина“ (Куликоварти çапăçу çинчен калани) произведенине „Игăрь çинчен хунă йурăпа“ усă курса сырнă. Унпала вырăс писателĕсем те—Пушкин, Островский т. ыт. те усă курнă.

„Игăрь çинчен хунă йурăн“ 1795 çулта ăнсăртран тупнă алçырăвĕ кайарахпа ӳкерсе илнĕ копи çеç пулса тăрат (XV-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче йе XVI-мĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнче ӳкерсе сырнă пулĕ ăна).

XIX-мĕш ĕмĕрте „Игăрь çинчен хунă йурăна“ тĕпчесе сырнă литературă нумай пичетленнĕ. Йурра хайне те вырăсла тата ытти чĕлхесемпе—чехла, сербиле, болгарла куçарнă. Хĕвелтухăç Иевропăри учоннăйсен „Игăрь çинчен хунă йурăна“ тишкерсе сырнă литературăла ĕçĕсем те пичетленсе тухнă.

Унпа Карл Маркс та питĕ интересленнĕ. Аслă Совет халăхĕ хайĕн паттăрла авалăхне пĕлет тата ăна йуратат. „Игăрь çинчен хунă йурă“ пирĕн вăл вырăс халăхĕн тата тĕнче литературин хаклă памятникĕ пулса тăнипе çеç мар, унсăр пуçне вăл ĕлĕкхи аваллăх вăхăтне вырăс халăхĕ хайĕн çĕршывне тĕрĕс-тĕкел, урăççиннĕн, хайĕн нацилĕхне тата културине тытса пурăнассиншĕн кĕрешнине кăтартса панипе те паха пулса тăрат.

Чăваш АССР
Финанс Халăх Комиссариатĕнчи

Йалхуçалăх налог Положенин 106 статйи тата налог инспектăрĕсемпе налог ревизорĕсен положенин 14-мĕш статйи тăрăх (ку положенисене ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче 697-мĕш № постановленипе çирĕплетнĕ) Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ Чăваш республикĕнчи пур учрежденисене, предприйатисене тата организацисене 1938 çулхи ийунĕн 5-мĕшĕнчен кайа йулмасăр çакна тума хушат: 1937 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1938 çулхи майăн 31-мĕшĕччен уйрăм хуçалăхла хресчĕнсене тĕрлĕрен ĕçсемшĕн, йалхуçалăх продуктисене тăратнăшăн, сутнăшăн тата ытти йенĕпе те мĕн чухлĕ укçа тӳлени çинчен районсенчи финанс пайĕсене сведĕнисем тăратмала.

Сведĕнисене вăхăтра тăратмасан, çавнашкалах тĕрĕс мар сведĕнисем тăратнăшăн айăплисене суд йĕркипе ответ тыттараççĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх
Комиссарĕ И. Захарăв.

Уполномоченный Чувашглавлита № 260.

Сев. Чебоксары, Типография № 1, Чувашполиграфтреста. Заказ № 408